# Развитие творческих способностей обучающихся на уроках родного языка в чувашской школе.

## ЧĂВАШ ШКУЛĔСЕНЧЕ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЧЕ АЧАСЕН ĂСЛАВЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАССИ

Аннотация. В статье сделана попытка проанализировать уровень сформированности и возможности развития навыков творческого письма на уроках родного языка в чувашской школе, предложить наиболее эффективные формы работы.

Ключевые слова: обучение, родной язык, творческое письмо, уровень сформированности, развитие, формы работы.

Чĕлхен этем пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк. Чĕлхене пула çеç эпир шухăшлама, шухăша каласа пама, ыттисене пĕлтерме пултаратпăр, урăхла каласан, чĕлхе пире хутшăнма, çыхăну йĕркелеме кирлĕ хатĕр пулса тăрать.

Раççей çĕршывĕнче темиçе тĕрлĕ халăх пурăнать. Вĕсен кашнин хăйĕн чĕлхи пур. Ч.лхе пур халёх пурнё=.нче те питех те пысёк вырён йышёнать? Хальхи: социаллё лару-тёру хёвёрт улшёнса пыракан: халёхсен харкамлёх туйём. вёйлёрах аталанма пу=ланё саманара: тёван ч.лхе п.лтер.ш. татах та \сет? Вёл _ халёхён т.п пуянлёх. _ унён аталану палли пулса тёрать? (1) Пирĕн вара тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Шел пулин те, 21 ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш чĕлхин аталанăвĕ сӳнсе пырать. +авёнпа шкулта тёван ч.лхене в.рентесси =ав тери яваплё, п.тер.шл. .=. +ак .= т.ллев. самай анлё. Паянхи пурнăç ачана пур енлĕн аталанма ыйтать. Çавăнпа учителĕн чĕлхене вĕрентнĕ май вĕренекенсен творчествăлла шухăшлавне аталантарасси çинчен те шутламалла. Ачан информацие ăнланма, ăша хывма, хăй шухăшне палăртма, пĕтĕмлетӳ тума пĕлмелле, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, чăвашла тĕрĕс калаçса-çырса хутшăнма пултармалла. Кунпа пĕрле унăн ăславлăх пултарулăхне вăратас, аталантарас тĕлĕшпе те ятарласа ĕçлемелле. Ăславлăх пултарулăхĕ çителĕклĕ аталанайман пулсан унăн малашнехи пурнăçĕнче йывăрлăхсем тухаççĕ. Çавăнпа та эпир суйласа илнĕ кала=у теми паянхи куншăн çивĕч тени вырăнлă тетпĕр. Вёл чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасен ăславлăх пултарулăхне аталантарас ĕçе мĕнле йĕркелесен ăнăçуллăрах пулма пултарни =инчен пул..

*Ăславлăх пултарулăхĕ* ăнлава тĕрлĕ ăсчах тĕрлĕрен ăнлантарать. Тĕслĕхрен, вырăссен психологĕ А. Н. Лук çапла калать: 1) Ыттисем курман проблемăсене курма пултарни. 2) Пĕр ăнлава тепĕр ăнлавпа улăштарса шухăш тĕвелеме пултарни. 3) Ыйтăва тĕрĕс татса пама пултарни. (5) Япаласемпе пулăмсене чăн куçпа курма пултарни. 5) Шухăшлав çаврăнăçуллă пулни. (5)

М. Р. Львов хăйĕн справочникĕнче ăславлăх пултарулăхĕ ăнлава ача ĕçе харкамлă тума пултарнипе çыхăнтарать. (6)

Паян ачасене вĕренме хавхалантарма питĕ йывăр. Чăваш чĕлхи урокĕсенче хăш-пĕр ачасем вĕренӳ материалне те ăша хывайманçĕ. Çакă вăл ачасем хăйсен шухăшĕсене анлăн уçса парайманнинче, тĕп шухăша шыраса тупайманнинче, хăйсен шухăшĕсене туллин пĕтĕмлетсе парайманнинче курăнать. Çак йывăрлăхсене çĕнтерсе пырас тесен учителĕн ачан ăславлăх пултарулăхне аталантарас тĕлĕшпе ятарласа, системăллă ĕçлемелле. Тата ачасен вĕренӳри çитĕнĕвĕсем вĕсен ӳсĕмне, психика уйрăмлăхĕсене тĕрĕс шута илнинчен те нумай килнине вĕрентӳçĕсен яланах асра тытмалла.

Психологи науки çакна палăртать: пуплев чĕлхепе усă курас ĕç-хĕл пулнă май этемĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕн тĕревĕ пулса тăрать. Этем калаçасшăн çеç калаçмасть, çырасшăн çеç çырмасть, вуласшăн çеç вуламасть, тăнласшăн çеç тăнламасть. Ку ĕç-хĕле вăл пурнăçри вăл е ку ĕç-хĕлпе çыхăнуллăн тăвать. Çавна кура чĕлхе вĕрентессине, пуплеве аталантарассине вĕренекенсен тĕп ĕçĕ-хĕлĕсемпе тачă çыхăнтарсан аван [7].

Вĕрентӳ тĕллевне, унăн тапхăрĕсене, мĕн тата мĕнлерех вĕрентмеллине палăртнă чухне те, вĕрентĕве йĕркелесе пынă чухне вĕрентӳçĕсен ачасен ӳсĕмне шута илмелле, вĕсене ăс-тăн аталанăвĕн шайĕ, кăмăл-туйăм туртăмĕ вĕрентӳпе пĕр килтĕр. Вара тин вĕрентӳ тухăçлă та ăнăçлă пулĕ.

Меслет=.сем вĕрентӳпе вĕренӳ ачасемшĕн «шăл çемми» пулмаллине, ачасен ăс-хакăл шайне, чун хавалне шута илни вĕрентӳ ĕçĕн тухăçлăхне, ăнăçлăхне ӳстернине палĕрта==.. Вĕрентӳ материалĕ те, вĕрентӳ меслечĕсемпе мелĕсем, вĕрентӳ хатĕрĕсем те çак чăнлăхпа килĕшсе тăмалла. Вĕрентӳ, ансаттисенчен пуçласа, кăткăсрах пĕлӳсемпе ăслайсем, хăнăхусем патне илсе пымалла. [6].

Вĕренӳ ĕçĕ ăнăçлă пулса пытăр тесен ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсемпе п.рле тата пултарулĕх аталанăв.н шайне пĕлни те пĕлтерĕшлĕ. Çакă вăл учителе урокра ачасен ăславлăх пултарулăхне аталантарма мĕнле мелсемпе ĕçлесен ăнăçлăрах пулмаллине кăтартать. Çак т.ллевпе эпир п.ч.к т.пчев ирттертĕмĕр. Унта Вăрнар районĕнчи Кӳстӳмĕр шкулĕнчи 6-мĕш тата 7-мĕш класс ачисем хутшăнчĕç, ĕçе пурнăçлама чăваш чĕлхи учителĕ – Одинцова Людмила Станиславовна пулăшрĕ.

Т.пчев *тĕллевĕ* – ачасен ăславлăх пултарулăхĕн шайне палăртасси. +ак пултарулĕх шайне тĕрĕслеме тĕрлĕ мелпе усă кураççĕ. Эпир улттăмĕш класра вĕренекенсене «Пулăшрĕç» ятлă сочинени евĕр изложени çыртартăмăр, çиччĕмĕш классене ятарлĕ темĕпа сочинени çырма с.нт.м.р.

Ачасен .=.сене икĕ паллăпа хакларĕмĕр - содержанипе пуплев пахалăхĕшĕн тата тĕрĕс çырнăшăн. Икĕ палли те чăваш чĕлхине пĕлнин шайне кăтартать. Содержани пахалăхне пăхсан, ачасенчен 32% ĕçе çӳллĕ шайра пурнăçланă. Тĕрĕс çырассине пăхсан – 32% çӳллĕ шайра, 68% – вăтам шайра. Çапла вара пĕтĕмĕшле 33,5% – „4” паллăлăх, 66,5% – „3” паллăлăх çырнă. Ачасен ĕç.сене тишкерсе тухсан эпир в.сем ытларах орфографи, грамматика тата пуплев йăнăшĕсем тунине асăрхарăмăр. Орфографи йăнăшĕсенчен сăмах варринчи вĕрĕм хупă сасăсене 2 сас паллипе палăртманни *(иртерчĕ – ирттерчĕ, пĕремĕш – пĕрремĕш, вĕçĕн – вĕççĕн)*, кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли çырманни *(пул – пуль)*, е ёна кирлĕ мар çĕрте лартни *(кильмелле – килмелле),* сас палли сиктерсе хăварни *(çака – çакна),* пĕр сас палли вырăнне теприне çырни *(юлтах – юлташ, пĕчерчĕç – пĕтерчĕç)* палăрчĕç. Грамматика йăнăшĕсем те чылай пулчĕç. В.сенчен нумайăшĕ вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсемпе çыхăннă йăнăшсем пулчĕç *(карĕ – кайрĕ, ытать – ыйтать, кум пек – кун пек, хăварашăн – хăварасшăн).* Унсăр пуçне ачасем татăксемпе хыç сăмахсене çырнă чухне нумай йăнăш тунă *(никамта – никам та, кунпек – кун пек, нихăçанта – нихăçан та, темĕнçинчен – темĕн çинчен, килчĕте – килчĕ те, унчух – ун чух)*

Ĕçсене тĕрĕсленĕ май =авĕн пекех предложенисене шухăш тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе çыхăнманни, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен сăмаха тĕрĕс суйласа илменни *(вăл пĕчĕк класпа калаçу ирттерчĕ, туслă юлташ),* кирлĕ мар çĕртех пĕр сăмаха темиçе хут çырни, стиль тĕлĕшĕнчен килĕшӳсĕр сăмахсене кĕртсе лартни чылай палăрчĕ. Йăнăшсенчен хăшĕсене ачасем тимсĕрлĕхĕпе тата вĕсем вырăсла шухăшласа чăвашла куçарса çырнипе те сăлтавлама пулать.

Ёславлӗ пултарулӗхне илес пулсан вӗренекенсенчен нумайӑшӗ учитель панӑ темӑна тӗрӗс ӑнланнӑ, ӑна туллин уҫса пама тӑрӑшнӑ. Ачасем сочинени евӗр изложенийӗн тытӑмне тӗрӗс сыхласа хӑварнӑ, кашни пайӗ пӗр-пӗринпе вӑчӑра пек ҫыхӑнса пыраҫҫӗ. Сочинени =ырнин результач.сене илес пулсан ачасенчен чылайӗш. тӗп шухӑша туллин уҫса пама тӑрӑшнине палӗртмалла. Анчах та вӗренекенсем хӑйсен калас шухӑшне вӗҫне ҫити ҫырса парайманни те, хӑш-пӗр предложенисенче шухӗша вӗҫлеменни те курӑнать. Ачасен сӑмах йыш. ҫителӗклӗ пулсан та вӗсен ӗҫӗсем типӗ, чухӑн, вӗренекенсем хӑйсен ӗҫӗсенче илемлӗх мелӗсемпе пит. сайра усӑ кура==.. Сюжета та кӑсӗклӑ аталантарма пултарайманни те палӗрч.: пурин ӗҫӗ те пӗр евӗрлӗ йӗркеленнӗ.

Ҫапла вара, тӗрӗслев чӑваш шкулӗсенчи 6-мӗш тата 7-мӗш класс ачисен ӑславлӑх пултарулӑх.н шай. пӗтӗмӗшле вӑтам пулнине палӑртр.. Ҫакӑ вара вӗрентекене ачасене ӑславлӑх пултарулӑхне аталантарас т.л.шпе ятарласа, т.ллевл. ӗҫлеме хистет.

Чӑваш шкулӗсенче 6-мӗш тата 7-мӗш класс ачисен ӑславлӑх пултарулӑхне аталантарма программӑра ятарласа вӗхӗт уйӑрман мар. Анчах ҫак сехетсем ҫителӗксӗр пуль тетп.р.

Психологсем те вӑтам класри ачасен ӑславлӑх пултарулӑхӗн аталанӗв.нче йывӑрлӑхсем палӑртаҫҫӗ. Ку =улхисем тантӑшӗсем умӗнче хӑйсен шухӑшӗсене уҫса пама вӑтанса, шикленсе тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа та ачасем кашни хӑйӗн шухӑшлавне тӗплӗн, пӗтӗмӗшле, вӗҫне ҫити уҫса параймаҫҫӗ. Ҫакна кура учителӗн вӗренекенсен ӑславлӑхне аталантарма урокра тӗрлӗ вӗрентӳ меслечӗсемпе усӑ курмалла. Меслет =.сем вӑтам класри ачасен ӑславлӑх пултарулӑхне аталантарас ӗҫре усӑ курмалли чылай мелпе меслет палӗрта==.. В.сенчен тухӗ=лӗраххисем шут.нче =аксене асӗнмалла.

*Ӑсласа каласа пани.* 5-7-мӗш классенче ачасене чӑн пулманни ҫинчен калав ҫыртарма пулать. Ҫакна 2 мелпе тума май пур. Тӗслӗхрен, учитель темӑна тата калав пуҫламӑшне хӑй парать. Калӑпӑр, ячӗ *«Вӑрманти пушар».* Ёна =апла пу=латпӗр.

*Урамра ҫуллахи ӑшӑ ҫанталӑк тӑнӑ. Вӑрман ҫумӗпе Мишӑпа ашшӗ уҫӑлса ҫӳренӗ, сасартӑк…*

Е тата учитель илемлӗ литература хайлавне илет те калавӑн пуҫламӑшне вуласа парать, малалла ачасен хӑйсен шутласа ӑсласа ҫырмалла.

Тепӗр мел вӑл – вӑл учитель сӗннӗ сюжет йӗрӗ тӑрӑх ӑслани. Кун пек чухне вӗрентекен ачасене ӗҫ-хӗл мӗнле йӗркепе пулса пынине калать те ун тӑрӑх хӑйсене хайлама сӗнет.

Ачасен ӑславлӑх пултарулӑхне аталантармалли мелсенчен тепри вӑл – *пӗр-пӗр япалана сӑнласа пани.* Темле япалана та сӑнласа пама пулать: картинӑна, чӗр-чунсене, ҫынсене, ҫут ҫанталӑка тата ыт. те. Тӗслӗхрен, ачасене ҫут ҫанталӑкӑн пӗр-пӗр пулӑма е объектне сӑнлаттарма пулать. Малтан учитель вӗренекенсемпе пӗрле мӗн-мӗн сӑнласа памаллине сӳтсе явать, унтан хӑйсем тӗллӗн сӑнлава йӗркелеме сӗнет. Ҫак ӗҫре текст калӑпӑшӗ ытла пӗлтерӗшлӗ мар. Ачасем ҫут ҫанталӑка туллинрех сӑнласа пама пултарни паха. Сочиненисене тӗрӗсленӗ чухне учитель ҫакӑн ҫине вӑйлӑ пусӑм тӑвать. *Картина тӑрӑх ҫырнӑ сочинени* те ачасен ӑславлӑхне пултарулӑхне аталантарать.

*Заметкӑсем, ҫырусем, дневниксем* те ачасен ӑславлӑхне ҫӳллӗ шая хӑпартаҫҫӗ. Кашни спектакль, концерт, музей, кино хыҫҫӑн пӗчӗк заметкӑсем ҫыртарса шкулти хаҫатра кӑларттарни,

тĕрлĕ уявсенче пĕр-пĕрне кĕске çыру çырса саламлаттарни  ачасен ăславлăхĕшĕн усăллă пулĕччĕ. Çавăнпа та вĕрентекенĕн ачасене çак пĕчĕк çыру ĕçĕсене пурнăçлаттарса тăма тăрăшмалла.

*Фантазиллĕ ӳкерчĕк.* Ачан ăсра сăнарланнă чăн пурнăçра пулма пултарайман ӳкерчĕке сăнласа памалла. Вĕренекен çыру ĕçне чĕрĕ, лайăх, ăнланмалла пурнăçланă пулсан, учитель ачасене çак сочинени тăрăх ӳкерчĕк те ӳкерттерме пултарать.

Çавăн пекех вĕренекенсене пĕлӳ парас, вĕсен шухăшлас пултарулăхне, çыхăнуллă пуплевне аталантарас ĕçре чăваш чĕлхипе литература урокĕсенче ирттерекен çыру ĕçĕсем – тĕрлĕ тĕслĕ диктантсемпе изложенисене çырма вĕрентни те пысăк вырăн йышăнать

*Харпăр хăй диктанчĕ* – пултарулăх диктанчĕн пĕр тĕсĕ. Ăна ирттерме учитель доска çине пĕр-пĕр орфографи правилипе темиçе сăмах çырса парать. Çав сăмахсемпе усă курса ачасем хăйсем тĕллĕн диктант çыраççĕ. *Ирĕклĕ диктант* – изложение аса илтерекен диктант. Ку çыру ĕçĕ ачасен асра тытас пултарулăхне, тавçăрулăхне, шухăшлавĕпе ăнкарулăхне ӳстерме пулăшать. Учитель ачасене çыхăнуллă текст вуласа парать. Ун хыççăн вĕренекенсем текст содержанине калаççĕ. Кайран учитель текста 3-4-шар йĕркен вулать. Ачасем диктанта сăмах хыççăн сăмах вуласа çырнă пек мар, кашни предложение хăйсем тĕллĕн çыраççĕ. Вĕренекенсен предложенисен шухăшне, сăмахĕсене сыхласа хăварма тăрăшмалла.

Ачан пултарулăхне аталантарас ĕçре изложенисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ терĕмĕр. Вĕренекеншĕн панă текст тĕслĕх пулса тăрать, çавăн тăрăх ача хăйĕн шухăшне каласа пама вĕренет, çавăнпа пĕрлех чĕлхе пуянлăхĕн тĕрлĕ мелĕсене алла илет. Апла пулсан изложени çырассин тĕллевĕ текст содержанине туллин уçса, пĕр улăштармасăр каласа пани кăна пулсан пĕлтерĕшĕ ачасен пуплевне аталантарас ĕçре ытла та чакса ларнă пулĕччĕ. Творчество ĕçĕн урокĕсем ачана хăй тĕллĕн шухăшласа çырма, ăс-тăнне пур енлĕн аталантарма пулăшмалла.

Текстсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Материал çумне мĕн хушса çырасси ытларах текст содержанийĕнчен килет. Хăш-пĕр чухне ачашăн текст çумне хушса çырма хăйĕн тавра курăмĕ, пурнăçра пухнă опычĕ те çителĕклĕ. Тепĕр чухне вара – ятарласа хатĕрленĕ материал кирлĕ. Çакна вăл аслисен опытĕнче, хаçат-журналсенче е кĕнекесенче тупма пултарать. Енчен те текстра пĕр-пĕр пулăм çинчен пĕтĕмĕшле çеç каласа хăварнă пулсан шкул ачи çак пулăм çинчен тĕплĕн çырса кăтартать. Тепĕр чухне текстра конкретлă материала çеç пани те тĕл пулать, ун пек чухне ачан хăйĕн пĕтĕмлетсе çырма тивет. *Текста улăштарса çырнă изложенисен* уйрăмлăхĕ вĕренекенсем текста тĕрлĕ майлă улăштарма, çĕнетме пултарнипе çыхăнса тăрать. Кун пек изложенисем ирттернĕ чухне учителĕн вĕрентӳ ĕçĕнчи тĕп тĕллевĕ вăл – вĕренекенсене панă текста хăйĕн ятĕнчен калама хатĕрленнĕ текст пек йышăнма хăнăхтарасси; иккĕмĕшĕнчен, текста улăштарнă май унăн чĕлхинче тĕрлĕ улшăну пулма пултарнине ачасене тĕплĕн кăтартса, ăнлантарса парасси [3].

+апла вара, вĕренекенсен ăславлăхне аталантарма ч.лхе меслетл.х.нче тĕрлĕ мелсем, .=сем с.не==.. Кашни учитель вĕсенчен ачасен шайне, \с.мне тив.=екеннисене суйласа илет.

Усă курнă литература

1. Андреев, И. А. Чӑваш чӗлхи программи : чӑв. шк. 5-9 кл. вал. / И. А. Андреев, Г. Н. Семёнова, Ю. М. Виноградов. – Шупашкар : Чӑв. Респ. вӗренӳ ин-чӗ, 2013. – 63 с.

2. Артемьева Т.В. К вопросу о языковом образовании младших школьников в чувашской начальной школе в условиях двуязычия и многоязычия. // Народная школа, 1/2017, С.

3. Брусова, Г. Ф. Тексты для изложений по чувашскому языку в V-IX классах: виды изложений и методика их проведения / Г. Ф. Брусова. – 2-е изд., перераб. и доп. – Чебоксары : ЧГПУ, 2015. – 140 с.

4. Лук, А. Н. Психология творчества / А. Н. Лук. – Москва : Наука, 1978. – 125 с.

5. Львов, М. Р. Словарь-справочник по методике преподавания русского языка : пособие для студентов пед. вузов и колледжей / М. Р. Львов. – Москва : Academia : Высш. шк., 1999. – 271 с.

6. Львов, М. Р. Школа творческого мышления : учеб. пособие по рус. яз. для обучения в мл. кл. / М. Р. Львов. – Москва : Academia, 2002. – 464 с.

7. Люблинская, А. А. Детская психология / А. А. Люблинская. – Москва : Просвещение, 1971. – 415 с.